# ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН
# САККУНĚ

## ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИН "ЧĂВАШ РЕСПУБЛИКИНЧИ ИРĚКЛĚ ПУШАР ХУРАЛĚ ÇИНЧЕН" САККУННЕ УЛШĂНУСЕМ КĚРТЕССИ ÇИНЧЕН

*Чăваш Республикин Патшалăх Канашě*
*2023 çулхи раштав уйăхěн 21-мěшěнче*
*йышăннă*

**1 статья**

Чăваш Республикин "Чăваш Республикинчи ирěклě пушар хуралě çинчен" 2011 çулхи авăн уйăхěн 15-мěшěнчи 62 №-лě саккунне (Чăваш Республикин Патшалăх Канашěн ведомоçěсем, 2011, 91 №; Чăваш Республикин Саккунěсен пуххи, 2014, 3 №; 2017, 5 №) çакăн пек улшăнусем кěртес:

1) 1 статьяра "пушар хуралěн общество пěрлешěвěсене" сăмахсене "ирěклě пушар хуралěн общество пěрлешěвěсене (малалла – пушар хуралěн общество пěрлешěвěсем)" сăмахсемпе улăштарас;

2) 6 статьяра "учредитель (учредительсен)" сăмахсене "ирěклě пушар хуралěн подразделенийěсене туса хуракан организацисен" сăмахсемпе улăштарас;

3) 7 статьян пěрремěш абзацěнче "Чăваш Республикин ěç тăвакан власть органěсем" сăмахсене "Чăваш Республикин ěç тăвакан органěсем" сăмахсемпе улăштарас.

**2 статья**

1. Çак Саккун, çак статьяпа урăх вăхăтра вăя кĕртме палăртнă положенисемсĕр пуçне, ăна официаллă йĕркепе пичетлесе кăларнă кунран пуçласа вăя кĕрет.

2. Çак Саккунăн 1 статйин 1-мĕш тата 2-мĕш пункчĕсем 2024 çулхи нарăс уйăхĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа вăя кĕреççĕ.

Чăваш Республикин
Пуçлăхĕ О. Николаев

Шупашкар хули
2023 çулхи раштав уйăхĕн 21-мĕшĕ
102 №